Долгов В. Куçару мастерĕ / В. Долгов // Чăваш коммунĕ. – 1940. –20 юпа.

# КОНСТАНТИН

# КУÇАРУ МАСТЕРĔ

XX-мĕш ĕмĕрĕн пĕррелмĕш вунăçулĕнче чăваш литературипе пуçласа яракан поэт Константин Иванов хăйĕн пархатарлă ĕçне тума тытăнать (анчах та вăл нумаях ĕçлеймест: ăна часах хĕнхур хупласа лартать). Çак чаплă поэт хăйĕн вилĕмсĕр произведенине — «Нарспи» поэмăна — çырнипе пĕрлех, пирĕн халăха валли вырăс поэчĕсен (Кольцовăн, Лермонтовăн, Некрасовăн, Майковăн) произведенийĕсене куçарать.

Кунта, чи малтан, М. Ю. Лермонтовăн «Песня про купца Калашникова» ятлă поэмине куçарни çинчен калас пулать. Лермонтовăн çак произведенийĕ, вырăс халăхĕн тивĕçлĕхне тата тыслăхне юратса мухтакан скер, Константин Ивановăн чун-хавалне питех те çывăх тăнă, унăн творчествăллă шухăшĕсене хавхалантарса çĕклентернĕ.

Халăх шухăш-кăмăлĕпе тулнă, халăх юратнă произведенисем вилĕмсĕр, тесçĕ. «Нарспи» поэма тата «Песня про купца Калашникова» произведени пирки те çавнах калама кирлĕ. «Нарспи» поэма пирĕн халăхăн кăмăлĕпе чун-хавалне çĕклентерсе пырас çĕрте, унăн илемлĕх туйăмĕсене йĕркелес çĕрте калама çук пысăк выранпа йышăнса тăнă. Лермонтов çырнă юрă та çавăн пекех. Вăл чаплă юрă чăваш литературин аталанăвĕнче те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Октябрьти революциччен чăваш чĕлхипе пичетленсе тухнă произведенисенчен, чи малтан, çав икĕ произведени — чи чаплă, чи хăватлă, чи сулмаклă произведенисем пулнă.

Константин Иванов, сăмахран, «Нарспи» поэмăпа çырман пулсан та, Лермонтовăн юррине куçарнипех те пирĕн литературăн историне кĕрсе юлма пултарнă.

К. В. Иванов мĕн пирки çав çулте асăннă поэтсен произведенийĕсене юратса куçарнă-ха?

Лермонтовăн «Песня про купца Калашникова...» ятлă произведенийĕ уйрăмăнах хăйĕн халăхлăхĕпе палăрса тăрать. Кольцовăн, Некрасовăн произведенийĕсем те çавах. Халăхлăх! — акă мĕн пирки юратса куçарнă вĕсене пирĕн классик К. Иванов.

Вырăс поэчĕсен Кольцовăн, Лермонтовăн, Майковăн поэзийĕнче чуп-чĕрепе пырса тивекен, вăйлă лиризм пур. Пирĕн поэт К. Иванов та паллă лирик пулнă. Лиризм! — акă, иккĕмĕшĕнчен, вăл мĕн пирки çав поэтсен сăввисене пĕтĕм кăмăлпа юратса куçарнă.

Виççĕмĕшĕнчен тата çакна калас пулать: К. Иванова çак поэтсен сăввисенчи янравлăх, музыка питех те килĕшнĕ. Лермонтов сăввисен янравлăхĕ çавтери пысăк пулнипе хăй вăхăтĕнче В. Г. Белинский те палăртса панă. «Лермонтов çырнă кирек хăш строкана вуласан та, музыка аккорчĕсене итленĕ пек туйăнать, çав вăхăтрах тата чĕтренсе тăракан хĕлĕхсене куçусемпе асăрхаса пыратăн пек...» тенĕ. Сăвăсен кузыки! — тата акă мĕн К. Ивановa пĕтĕм чĕререн илĕртнĕ.

Çапла вара, Константин Иванов чаплă произведенисем çырнă вăхăтрах вырăсла чĕлхерен чăвашла куçарас тĕлĕшпе те ăнăçлăн, пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ, — вăл куçарас ĕçре те чăпчăп поэт пулнă. Çавăнпа ĕнтĕ вăл куçарнă произведенисене вуланă чухне вĕсем урăх чĕлхерен куçарнă произведенисем пулнине пĕрре те сисместĕн.

К. Иванов — халăх поэчĕ. Вăл, хăйĕн шухăшĕсене 1905—1907 çç. революци обстановкинче аталантарнăскер, вырăссен писателĕсемпе поэчĕсене вуласа вĕреннĕскер, яланах халăхăн паллă юррисем патне туртăннă. Сăмахран, вăл 1906 çулта вырăс халăхĕн «Дубинушка» ятлă юррине чăвашла куçарма тытăннă. Çакă вăл — питех те чаплă юрă: ĕç юрри вăл, «ĕçлекен хура халăх юрри...», — çавăнпа ĕнтĕ вăл юрă Российăри халăхсем хушшинче калама çук вăйлăн саралнă.

Кунсăр пуçне К. Иванов «Марсельеза» юрă тăрăх «Тапранăр, вăранăр» сăвă çырнă. Ку вăл К. Ивановăн творчествинче чи революцилле сăвăсенчен пĕри пулса тăрать.

К. Иванов çак юрăсене ахальрен мар ĕнтĕ куçарса çырнă. Юрăсем халăх хушшинче пысăк вырăн йышăнса тăнине вăл лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа та унăн ĕмĕчĕсем халăх юррисем патнелле туртăнаççĕ.

К. Иванов мĕнтери хăюллăн ĕçлени çырнă чухне те, вырăсларан куçарнă чухне те чăваш юррисемпе, туй такмакĕсемпе хăюллăн усă курнă.

К. Иваноов мĕнтери хăюллăн ĕçлени çакăнтан та курăнать: «Песня про купца Калашникова...» поэмăна куçарнă чухне, вăл хăшпĕр вырăнсене улăштарарах куçарать. Паллах, кунта ăнсăртран пулнă япала мар, ăна вăл пĕлсе, юриех тунă.

Акă вĕсем:

«И разделют по себе злы татаровья
Коня доброго, саблю острую,
И седельце браное черкесское».

К. Иванов ку вырăна çапла куçарнă:

«Курайман тăшмансем уйăрса илĕç
Ырă утăмпала çивчĕ хĕçĕме,
Ырă утăм çинчен йĕнерне хывĕç».

Е тата:

«Православный народ ею тешился»,

—тесе çырнине:

«Ăна ырă халăх итлесе тăчĕ», тесе куçарать.

Всему народу христианскому
Слава! — тенине:
Мухтав мĕнпур халăха!
Мухтав!» — тесе куçарать.

Паллах, çакă вăл К. Ивановăн мировоззренийĕнчен килнĕ. Прогрессивлă шухăшсемпе çунатланнă поэт çак ĕç çине уйрăм сăмахсем енчен мар, çав произведенин тупсăмĕ енчен пырса пăхнă, çапла вара вăл М. Ю. Лермонтовăн протестне тĕрĕс ăнланса илнĕ.

Çак паттăр поэт, паттăр талант хăйĕн творчествăллă ĕçĕ урлă патша саманинчи тĕттĕмлĕхе хирĕç кĕрешнĕ.

Лермонтов — «вырăс халăхĕн ярçутă çăлтăрĕ, — çавтери хăвăрт çугăлса, хăвăрт анса кайнă çăлтăр», тесе çырнă Н. А. Добролюбов. Пирĕн Константин Иванов та çавах: вăл патша саманинчи сĕм тĕттĕм кунсенче вутăнхĕмĕн çунса çĕкленнĕ те, хăйĕн хăватлă поэзипе Лермонтовăн, Кольцовăн, Некрасовăн поэзийĕнчи ялкăшса тăракан сулăмсемпе пĕрлештерсе, кĕске вăхăтлăха пулин те, çутă çăлтăр пек çунса тăнă.

**В. ДОЛГОВ.**